**Литература**

1. Андреева, Н.Н. Сбалансированность двуязычия в «Букваре для чуваш» И.Я. Яковлева / Н.Н. Андреева // Проблемы обучения двуязычию в образовательных учреждениях Чувашской Республики : Сборник статей. – Чебоксары : ЧРИО, 2001. – С. 22-25.
2. Билингвизм. Материал из Википедии – свободной энциклопедии http://ru.wikipedia.org/wiki/%C1%E8%EB%E8%ED%E3%E2%E8%E7%EC
3. Вандышева А.В., Рябоконь М.В. Нейропсихологический аспект естественного и искусственного билингвизма
4. Выготский Л.С. К вопросу о многоязычии в детском возрасте http: //psychlib.ru/mgppu/vur/VUR-0531.htm
5. Выготский Л.С. Собрание сочинений : В 6-ти т. Т.3.Проблемы развития психики / Под ред. А.М.Матюшкина. – М. : Педагогика, 1983.
6. Григорьева, Р.А. Чуваши : современные этнокультурные процессы / Р.А. Григорьева. – М. : Наука, 1988.
7. Дуэль А., Лукашов М. С какого возраста начинать изучение иностранного языка?http://filolingvia.com/news/s_kakogo_vozrasta_nachinat_izuchenie_inostrannogo_jazyka/2010-08-26-4990
8. Земляков, А.Е. Иван Яковлевич Яковлев и современность / А.Е. Земляков. – Чебоксары : Чуваш. госуд. пед. ин-т, 1997.
9. Этнопедагогический манифест И.Я. Яковлева (К 155-летию со дня рождения И.Я. Яковлева). – Чебоксары : Чебоксарский институт экономики и менеджмента Санкт-Петербургского государственного политехнического университета, 2003.
10. Яковлев, И.Я. Воспоминания. Издание второе, дополненное / И.Я. Яковлев. – Чебоксары : Чувашское книжное издательство, 1983.
11. http://chuvpsy.ru/index.php/nauchnaya-zhizn/publikatsii/244-psikhologicheskie-aspekty-chuvashsko-russkogo-bilingvizma

*Артемьева Т. В.,*
*И.Я. Яковлев ячĕллĕ ЧППУ доцентĕ;*
*Макаркин В. Н.,*
***пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан Туван шкулĕн учителĕ***

## ЧĂВАШ ПУÇЛАМĂШ ШКУЛĔНЧЕ ХУТЛА ВĔРЕНТНĔ МАЙ АЧАСЕН УНИВЕРСАЛЛĂ ВĔРЕНӲ ĔÇĔСЕНЕ КАЛĂПЛАССИ

Пуçламăш шкулта илнĕ хăнăхусем – малашнехи вĕренӳре чи кирлисем. Вулама, çырма, çыхăнуллă калаçма, итлеме, шутлама пĕлмесĕр малалла вĕренме питех те кансĕр.

Пĕлӳлĕх тĕнчине кĕме вара тăван чĕлхе пулăшать. Тăван чĕлхене вĕрентни кирлĕрен те кирлĕ ăслайсемпе хăнăхусене аталантарса çирĕплетессипе çыхăнать. Çав ăслайсемпе хăнăхусем шутĕнче – ăнланса вуласси тата тăнласси, çыхăнуллă калаçасси, çырасси. Çапла, вулама-çырма вĕрентесси – вĕренӳ никĕсĕ пулса тăрать. Вăл ачана ытти предметсене вĕренмелли, ăслайсене алла илмелли никĕс хывать.

2011-2012-мĕш вĕренӳ çулĕнче пуçламăш шкулта вĕренĕвĕн çĕнĕ стандарчĕ вăя кĕчĕ. Ăна стандартăн иккĕмĕш ăрăвĕ теççĕ. Вăл малтанхинчен пĕтĕмĕшле концепцийĕ тĕлĕшĕнчен самай уйрăлса тăрать. Çавăнпа тăван

чӗлхене вӗрентессипе ҫыхӑннӑ тӗллевсемпе задачӑсем те вӗренӗвӗн ҫӗнӗ стандарчӗпе килӗшсе тӑмалла.

Вӗрентӳ ӗҫӗнче кашни предмет шалашӗнчех тӗп пахалӑх тӗллевӗсене шута илсе ӗҫлемелле. Хутла вӗрентес ӗҫре вӗсем ҫаксем шутланаҫҫӗ:

– ачасен нумай пӗлес-вӗренес, харпӑр хӑй ӗҫ-хӗлне йӗркелеме хӑнӑхас кӑмӑлне чӗртсе ярасси, аталантарасси;

– вӗсене хӑйсен харкамлӑхне ӑнланма пулӑшасси, таврари тӗнчене хӑйне евӗр курма-йышӑнма, харпӑр хӑй хӑтланӑшӗсене хак пама, йывӑрлӑхсене ҫӗнтерме вӗрентсе пырасси, вӗсен ӑславлӑ мехелне аталантарасси;

– ачасене ҫынсем хушшинче ҫураҫуллӑ пурӑнма, ыттисене пулӑшма хавас пулма, пӗтӗм этемлӗх пахалӑхӗсене ӑнланса ӑша хума вӗрентсе пырасси;

– ачасене вӗсем кашниййӗ хӑйӗн тӑван ҫӗршывӗн пӗчӗк гражданинӗ пулнине ӑша хума пулӑшасси;

– вӗренекенсене тавралӑха, ҫут ҫанталӑка, харпӑр хӑйне, сывлӑхне упрама вӗрентесси.

Ҫак пахалӑх тӗллевӗсене пурнӑҫласси вӗрентӳ ӗҫӗсен комплексне харпӑрланӑ май пулса пырать. Ҫӗнӗ стандартпа шайлашуллӑ универсаллӑ вӗренӳ ӗҫӗн тӑватӑ тӗсне уйӑраҫҫӗ: харкамлӑх (личностные), йӗркелӳ (регулятивные), пӗлӳлӗх (познавательные), хутшӑну (коммуникативные).

**Йӗркелӳ ӗҫӗсем** ачасене вӗрентӳ ӗҫ-хӗлне, унӑн тапхӑрӗсене (ӗҫ тӗллевне уҫӑмласси – планласси – ӗҫе пурнӑҫласси – результачӗсене хакласси-пахаласси – тӳрлетесси) уҫӑмласа йӗркелеме хӑнӑхтарассипе ҫыхӑннӑ. Ку вӑл питех те кӑткӑс ӗҫ.

Хутла вӗрентнӗ май ҫак хӑнӑхусем майӗпен йӗркеленсе пыраҫҫӗ. Малтан ачасем кӑтартусемпе хушусене ӑнланма, мӗнле ӗҫ тумаллине уҫӑмлама вӗренеҫҫӗ. Вӗсене пулӑшма «Чӑваш букварӗпе», ӗҫ тетрачӗсене ятарлӑ паллӑсем, персонажсем кӗртнӗ. Кӗнеке страницисен тытӑмӗ те ачасене ӗҫе планлама, ӗҫ йӗркине тытса пыма вӗрентет: сӑмахсене вулас тесен сас паллисене асӑмламалла, сыпӑксен тӗрлӗ тӗсне вулама вӗренмелле. Текст содержанине тӗрӗс уҫӑмлас тесен умӗнхи ӳкерчӗке сӑнамалла.

Электронла пособире кӑтартусемсӗр пуҫне ӗҫсен йӗркин тӗслӗхӗсене те панӑ.

Сӑмахран, пособин пӗрремӗш пайӗнче ачасем ӳкерчӗк тӑрӑх пӗр-пӗр ӗҫ, пулӑм, япала ҫинчен Маринепе Антун (пособири персонажсем) каласа панине итлеҫҫӗ. Ку вӑл вӗсемшӗн ӗҫ результачӗн тӗслӗхӗ пулать. Унтан Мария Васильевна (пособири тепӗр персонаж) ыйтӑвӗсене хуравласа калу йӗркине йӗрлеҫҫӗ. Кун хыҫҫӑн калав йӗркине ҫирӗплетес тӗллевпе Мария Васильевна е ыйтуллӑ план сӗнет, е кӑтартусем парать.

Ҫапла вара, ачасем Антунпа Марине калананине тӗслӗх пек усӑ курса хӑйсем ҫинчен каласа панӑ май вӗренӳ ӗҫӗн задачисене курма, ӑнланма, хӑйсем те палӑртма, унпа шайлашуллӑ ӗҫ йӗркине планлама, ыттисем ҫакна мӗнле йӗркеленине сӑнаса, кӑтартусене тӗслӗх пек усӑ курса, хӑйсен планӗ ҫине тӗревленсе ӗҫлеме вӗренсе пыраҫҫӗ.

Пособин виççĕмĕш пайĕнчи хăнăхтарусемпе ĕçсем ытларах ачасене хăйсем тĕллĕн ĕçлеттерме вĕрентессипе, вĕсен хăйсем тĕллĕнлĕхне аталантарассипе çыхăннă. Ачасем кăтартусене вулаççĕ, çапла ĕç задачипе, йĕркипе паллашаççĕ. Ĕç результачĕ мĕнле пулмаллине малтан хăйсем тĕллĕн шутлаççĕ, унтан тин пĕрле сÿтсе яваççĕ. Çакă ачасене харпăр хăй тата ыттисен ĕçне тишкерме, хаклама вĕренсе пыма пулăшать. Вĕсем пĕр ĕçех тĕрлĕрен пурнăçлама пулнине, результачĕ те тĕрлĕрен пулма пултарнине курса ăша хураççĕ, ăнăçлăраххисене суйласа палăртма вĕренеççĕ.

Юлашкинчен экран çине тĕслĕхшĕн сĕннĕ хурав тухать. Ачасем унтипе хăйсем шутласа каланине шайлаштараççĕ, тĕрĕслеççĕ, тÿрлетеççĕ. Çапла вара вĕсен хăйсен ĕçне тĕрĕслесе тÿрлетес хăнăху та йĕркеленсе пырать.

Çакăн евĕрлĕ тĕллевлĕ ĕçсене «Çыру тетрачĕсене» те кĕртнĕ. Ачасем сас паллисене мĕнле çырмаллине, вĕсене сыпăкра е сăмахра епле çыхăнтармаллине, хăçан çыхăнăвăн хăш тĕсне суйламаллине утăмăн-утăмăн сăнаса евĕрлесе кайран çак ĕçе хăйсем тĕллĕн планласа пурнăçлама вĕренеççĕ.

**Универсаллă пĕлÿлĕх ĕçĕсене** йĕркелессипе çыхăннă хăнăхтарусем вĕрентÿ комплексĕн кашни компонентĕнчех тĕп вырăнта. Ыттисен тата хăйсен пуплевне тимлесе ачасем чĕлхен элеменчĕсене асăрхама, вĕсем пĕр-пĕринпе мĕнле çыхăннине курма хăнăхаççĕ. Пуплеври предложенисене, предложенири сăмахсене, сăмахри сасăсене уйăрнă, каялла сасăсенчен сăмахсем, сăмахсенчен предложенисем, предложенисенчен текст калăпланă май вĕсем тишкерÿ, пĕтĕçтерÿ ĕçĕсене вĕренсе пыраççĕ. Пулăмсене ушкăнлама (уçă е хупă сасă, çемçе уçă е хытă уçă), уйрăмлăхсемпе пĕрпеклĕхсене палăртма хăнăхаççĕ. Çав вăхăтрах тишкерÿре схемăсемпе, фишкăсемпе усă курни ачасене курăмлă тăратнă информацине йышăнма-ăнланма, хăйсене те çавăн пек палăртма вĕрентет.

Тишкерÿ-пĕтĕçтерÿ ĕçĕсемпе çыхăннă хăнăхтарусем «Чăваш букварĕпе» çыру тетрачĕсенче те, таблицăсенче те пур.

Букварьти хăш-пĕр сăмахсене е сас паллисене ÿкерчĕкпе е фишкăпа кăтартнă текстсене тишкерни, пăтраштарнă предложенисенчен текст, сăмахсенчен предложени калăплани, сиктерсе хăварнă сас паллисене хушса çырни – çакăн евĕрлĕ хăнăхтарусемпе ĕçсене пурнăçлани те ачасене универсаллă пĕлÿ ĕçĕсене ăнăçлăрах алла илме пулăшать.

**Хутшăну ĕçĕсене вĕрентесси.** Шкула тин килнĕ ачан пуплевĕ те, хутшăну ятарлă хăнăхăвĕсем те çителĕклĕ йĕркеленсе çитеймен. Ку тĕлĕшпе букварь умĕнхи тапхăртан пуçласа вĕренÿ çулĕ вĕçленниченех тĕллевлĕ ĕçлемелле. Вĕренÿ комплексне калăпланă чухне çак ыйтăва çирĕп йĕрлесе пынă. Кашни компонентĕнчех ятарлă ĕçсемпе хăнăхтарусен системине йĕркеленĕ. Букварь умĕнхи сюжетлă ÿкерчĕксем тăрăх калаçнă май ачасем пуплев ăнлава ăша хураççĕ, ун тытăмне уçăмлаççĕ, тĕрлĕ формине (диалог, монолог) харпăрласа пыраççĕ. Ача пуплевпе хутшăну хатĕрĕ пек усă курма хăнăхать, çав вăхăтрах чĕлхене юри вĕренме те пуçлать: унăн вак пайĕсене (элеменчĕсене) уйăрма, вĕсем пĕр-пĕринпе мĕнле çыхăннине курма-сисме хăнăхать: пуплев предложенисенчен тăрать, предложенисем тĕрлисем пулаççĕ, кашнийĕн тытăмĕ уйрăм, вĕсем пĕр-пĕринпе ятарлă йĕркепе, хатĕрсемпе çыхăнаççĕ. Ачасене çак хăнăхусене ăнăçлă харпăрлама

фишкăсемпе, схемăсемпе ĕçлени те пит пулăшать. Вĕсемпе меслетлĕх кĕнекинче сĕннĕ пек усă курса ачасем малтан текст тытăмне ăнланаççĕ, унтан схемăсем тăрăх хăйсем текст калăплаççĕ.

Ачасене аслисемпе, пĕр-пĕринпе хутшăнма вĕрентесси тĕрлĕ ăслай-хăнăху йĕркелессипе çыхăннă: чи малтан итлев тата калу хăнăхăвĕсене йĕркелессипе. Çак тĕллевпе кĕнекепе ĕçлени çеç çителĕксĕррине шута илсе «Чăваш букварĕ» çумне ятарлă электронла пособи калăпланă. Унти букварь умĕнхи тапхăрти материал шăпах ачасене итлев, калу хăнăхăвĕсене ăнăçлă харпăрлама пулăшать: ачасем ӳкерчĕксене сăнаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ, хăйсемпе тантăш персонажсен хуравĕсене, çыхăнуллă тексчĕсен тĕслĕхĕсене итлеççĕ, хăйсем те вĕсем пек хайлама тăрăшаççĕ. Майĕпен ыттисен тата хăйсен пуплевне тимлеме-сăнама пуçлаççĕ, пуплев тытăмне ăша хурса хăйсем те йĕркелеме вĕренсе çитеççĕ.

Букварь тата букварь хыççăнхи тапхăрсенче ачасен чылай хутшăну ĕçĕсене тарăнрах харпăрлама май пур. «Чăваш букварьне» малтанхи страницăсенчен пуçласах тĕрлĕ жанрлă, тĕрлĕ тытăмлă текстсем кĕртме тăрăшнă. Вĕсемпе ĕçленĕ май ачасем ыйтусене уçăмлама-ăнланма, тĕрĕс, уçăмлă хуравлама; пуплевре предложенин тĕрлĕ тытăмĕпе усă курма; вуланă хайлавсене асăмласа каласа пама, хăйсен шухăшне ансаттăн палăртма вĕренеççĕ. Хайлавсене ачасен ӳсĕмне шута илсе суйланă. Вĕсенче çырса кăтартнă ĕçсемпе пулăмсем вĕренекенсене çывăх, вĕсемшĕн кăсăклă. Çавăнпа хайлавсене вуланă-тишкернĕ хыççăн хăйсемпе пулни-иртни çинчен калаçтарма меллĕ. Ачасем çапла çыхăнуллă каласа пама, пĕрлĕхлĕ калаçăва хутшăнма, ăна тытса пыма вĕренсе пыраççĕ.

Кунпа пĕрлех текстсене тишкернĕ май ачасен пуплев этикечĕн ансат ăслайĕсене те (чĕнесси, хăйне тимлеттересси, кăмăл тăвасси, сивлесси, йăлăнасси, тав тăвасси) харпăрлама майсем пулаççĕ.

Тĕслĕхшĕн «Ваттисемпе мăнукĕсем» текста илер. Текста вуланă май ачасем ваттисемпе вĕттисем епле сапăррăн хутшăннин, пĕр-пĕрне мĕнле чĕнмеллин, йăлăнмаллин паха тĕслĕхне сăнаççĕ, евĕрлеме пултараççĕ.

Çапла вара, хутшăну ĕçĕсене вĕрентесси кăткăс ĕç пулин те ăна ăнăçлă туса пыма вĕрентӳ комплексĕнче материал çителĕклĕ.

**Харкамлăх** ĕçĕсене йĕркелесси те самай анлă, кăткăс пулăм. Вăл чылай ăслай-хăнăху калăплассипе çыхăннă. Çакна ăнăçлă туса пыма вĕренӳ хатĕрĕсене çителĕклĕ материал кĕртнĕ. Шкул алăкне пĕрремĕш хут уçнă ачасене чи малтанах кунти пурнăçа, йĕркесене, вĕренекен яваплăхĕсене ăнланма, ăша хывма, пурнăçлама хăнăхтарса пымалла. Букварь умĕнхи тапхăрти уроксен задачисемпе шалашĕ, ĕçсен йĕрки шăпах çакăнпа çыхăннă та ĕнтĕ. Ачасем кĕнекери ӳкерчĕксене сăнаса, калавсемпе сăвăсем итлесе калаçнă май вĕренӳ мĕнле ĕç пулнине, вĕренекенĕн епле пулмаллине ăнланаççĕ, хăйсем те çапла пулма тăрăшаççĕ. Харпăр хăй сывлăхне сыхлама, çирĕплетме вĕрентесси пĕрремĕш кунран пуçласах тимлемелли задачăсем шутĕнче тăраççĕ. Умĕнхи тапхăрта малти вырăнта пĕлӳ илесси мар, хăнăхусем туянасси пулмалла.

Малалла вулав хăнăхăвĕсем йĕркеленсе пынă май харкамлăх ĕçĕсене калăпламалли майсем те анлăланаççĕ. Тĕрлĕ хайлавпа паллашнă, вĕсене сӳтсе

явнӑ май ачасем малтан *ҫемье, йӑх, ял-йыш,* унтан *тӑван ҫӗр-шыв, тӑван халӑх, тӑван чӗлхе* ӑнлавсене уҫӑмлаҫҫӗ, хӑйсем хӑш халӑх ҫынни пулнине ӑнланса пыраҫҫӗ, вӗсен тӑван халӑх историне, йӑли-йӗркине тарӑнрах пӗлес туйӑм амаланма пуҫлать.

Тӗпрен илсен, «Чӑваш букварӗпе» хутла вӗрентме сӗнекен вӗренӳ комплексӗ ачасен универсаллӑ вӗренӳ ӗҫӗн пур тӗсӗсене ӑнаҫлӑ вӗрентме май парать.

*Власова Л. В.,*
*филологи ӑслӑлӑхӗсен кандидачӗ,*
*Пушкӑрт патшалӑх университечӗн Ҫтерлӗри филиалӗн доценчӗ,*
*Алексеева Е.А.,*
*Пушкӑрт патшалӑх университечӗн Ҫтерлӗри филиалӗн студенчӗ*

## ЕРМЕККЕЙ ТӐРӐХӖНЧИ СУККУЛ ЧӐВАШӖСЕН КАЛАҪӐВӖ

*Работа выполнена при финансовой поддержке гранта СФ БашГУ, проект № 329 от 20 марта 2014 г.*

Хальхи вӑхӑтра диалект уйрӑмлӑхсене тӗпчес ӗҫре чылай материал пичетленет. Апла пулин Пушкӑрт ҫӗрӗнчи Ермеккей тӑрӑхӗнчи чӑвашсен калаҫу уйрӑмлӑхӗсене ятарласа тӗпченӗ ӗҫсем ҫукрах. Пирӗн тӗллев – асӑннӑ тӑрӑхри Суккул чӑваш ялӗн калаҫӑвне сӑнасси.

Лексика енчен пӑхсан ҫак ушкӑнсене кӗрекен вырӑнти калаҫу сӑмахӗсене тупса палӑртрӑмӑр: ӑру-тӑванлӑха палӑртакан сӑмахсем – *ӳкей анне* «мачеха», *ӳкей атте* «отчим», *ати* «свекр», *ани* «свекровь», кил-ҫуртпа ҫыхӑннӑ сӑмахсем – *маттик* «мотыга», *калик* «ложка», *куҫлӑх* «зеркало», *елпек* «чайное блюдо», *пакраҫ* «половник», *ӑскӑҫ* «совок», *пански йӗппи* «спицы», *хайчӑ* «ножницы», *кӑмкан* «чайник», *эптри* «шило», *юркан* «одеяло», апат-ҫимӗҫпе ҫыхӑннӑ сӑмахсем – *тӑварук* «творог», *кӑпӑрчӑ* «шкварки», *пӳремӗҫ* «ватрушки», тумтирпе ҫыхӑннӑ сӑмахсем – *кӑҫҫӑлха* «валенки», *ҫӑм наски* «шерстяные носки», *кӑсса* «карман», *чӗрҫитти* «фартук, передник», *чуссынькки* «чесанки», *алса туль* «рукавицы», ҫутҫанталӑк пулӑмӗсем – *ҫӑмӑр* «дождь», *пӑрҫа* «дождь с градом», *сӗлтӗш* «весенний рыхлый снег», йывӑҫ-курӑкпа ҫыхӑннӑ сӑмахсем – *чийа* «вишня», *палуми* «яблоня», *чим-чим курӑкӗ* «спорыш», *метрюшке* «душица, матрешка», *ҫеҫке* «цветок», *эрӗм* «полынь», *хир суханӗ* «дикий лук».

Килти выльӑх-чӗрлӗхе палӑртакан ушкӑнра ача-пӑча лексики вӑйлӑ палӑрать: *бучи-бучи* «овца», *махха* «собака», *мӑр-мӑр, пӗс-пӗс* «кошка», *мукки* «корова», *чух-чух* «свинья», *тӗкӗтик* «лошадь», *уйӑха* «жеребенок», *кирикким* «петух», *какак* «гусь».

Ермеккей тӑрӑхӗнчи чӑвашсен калаҫӑвӗнче ҫынна пӗлтерекен сӑмахсем те тӗл пулаҫҫӗ: *алпасти* «непричесанный, неряха», *алама* «плохой, нехороший», *паккӑҫ* «пакостник»: *Паккӑҫ* ача пулчӗ ку, *япӑх* «худой», *вӗри* «горячий, вспыльчивый»: Питӗ *вӗри* ҫын – ҫывӑх та ан пыр. Ҫын кӗлеткин пайӗсене палӑртакан сӑмахсем: *хул каликки* «лопатка», *карланкӑ* «горло»,